

# Анатолий Емельянов çырăвĕсем

ЕТКЕРЛĔХ

**Чăваш халăх писателĕ Емельянов Анатолий Викторович (10.01.1932 – 23.11.2000) пурăннă пулсан çак уйăхра 75 çул тултармаллаччĕ. Шел пулин те, вăл хăйĕн юбилейне кĕтсе илеймерĕ. Ытла та кĕске-çке этем кун-çулĕ! Писательшĕн вăл уйрăмах çителĕксĕр пек туйăнать. Çамрăклăх çулĕсем ăсталăха туптаса иртсе каяççĕ, кайран вăйпитти çулсем валли вăхăчĕ нумаях та юлмасть – пурнăç пăтăрмахĕсем, чир-чĕр кĕтсех тăраççĕ. Ахальтен мар генийллĕ Пушкин: «Жизнь коротка: перечитывать некогда», – тесе çырса хăварнă.**

**Анатолий Емельянов литературăри хăйне тивĕçлĕ вырăнне хăвăрт шыраса тупнă. Чăваш ялĕнче çуралса ўснĕскер, вăл хресчен нушине ачаран лайăх пĕлнĕ. Ахальтен мар ялти шкула пĕтерсен ветеринари техникумне вĕренме кĕнĕ. Темиçе çул хушши хăй суйласа илнĕ специальноçпа ĕçленĕ. Малалла пурнăç шăпи хăех ăна çул кăтартса пынă тейĕн: çар хĕсметĕнче туптаннă хастар чăваш ачине партипе комсомол ĕçĕ хăйĕн авăрне ярса илет. Малалла каллех – вĕренў, яваплă ĕç... Çакă ăна ял ĕçченĕсен çăмăл мар пурнăçне тарăнрах та тĕплĕнрех курса тишкерме май панă. Чĕри витĕр тухнă пулăмсем литература сăнарĕсем пулса калăпланнă. Ахальтен мар вулакансем вĕсене хапăлласа кĕтсе илнĕ. Çакнашкал пиçсе калăпланнă хайлавсем çеç халăх асĕнче юлаççĕ, писатель вара самана летописецĕн шайне çити çĕкленет. Ман шутпа, А.Емельянов ăсталăхĕн вăрттăнлăхĕ шăпах çакăнта.**

**Ятлă-сумлă писатель çине обществăлла ĕç çĕклемĕ те сахал мар тиеннĕ. Анатолий Викторович нумай çул хушши КПСС**

Чăваш обкомĕн членĕ, ЧАССР Аслă Канашĕн депутачĕ пулнă. Çакна май вăл инкеке лекнĕ ентешĕсен шăпине май пур таран çăмăллатма тăрăшнă, писательсен организацине ертсе пынă çулсенче ĕçтешсен йăла условийĕсене лайăхлатма пулăшнă. Мана та пурнăçра пысăк пулăшу кӳме пултарчĕ Анатолий Викторович. Иртнĕ ĕмĕрĕн çитмĕлмĕш çулĕсен вĕçĕнче эпĕ пĕр айăпсăр инкеке кĕрсе ӳкрĕм. Çакăн çинчен «Тăван Атăлта» (2006 ç., 8№) тĕплĕн çырса кăтартнăччĕ. А.В.Емельянов, писательсен йышне ертсе пыма пуçланăскер, мана элек лачакинчен туртса кăларма ал тăсса пачĕ.

Кам пулнă эп уншăн? Республика тулашĕнчи айван çыравçă, чăнлăха пытарма пĕлменнипе нушана лекнĕскер. Паллах, вăл манпа çыхланмасан та, манăн нушана курмăш пулма та пултарнă. Влаçа юрайман çынпа çыру çӳретни ăна хăйне сиен кӳме пултарнă. Анатолий Викторович пĕр шиксĕр «шанчăксăр Чĕмпĕр чăвашĕн» çырăвĕсене ĕçлĕн хуравлать, ăна тусĕ вырăнне хурса ырă канашсем парать, хăйĕн терт-нушисене те уçă кăмăлпа çырса кăтартать. Вăхăчĕ хĕсĕк пулин те, пĕр çырăва та хуравламасăр хăвармасть. Çав çырусенче вулакан умне писатель тĕнчи кампаррăн тухса тăрать, вĕсене вуланă чух чун канать, пуянланать.

...А.В.Емельянова юлашки хут 1995 çулта чăваш писателĕсен черетлĕ XVI съездĕнче тĕл пулнăччĕ. Унта вăл литературăри йывăрлăхсем çинчен чĕререн тухакан сăмахсем каларĕ. Уйрăмах чăваш писателĕсем темиçе ушкăна уйрăлса вăя сапалани пăшăрхантарчĕ ăна.

Тăхтав вăхăтĕнче суйлаври шут комиссийĕ ĕçлерĕ. Вăл хăйĕн ĕçне вĕçлессе кĕтсе писательсем ушкăнсене уйрăлса ирĕккĕн калаçма пуçларĕç. Эпĕ керменĕн пысăк кантăкĕн сакки çине канма ларнă Анатолий Викторович патне пытăм. Вăл манран Чĕмпĕр хыпарĕсене ыйтса пĕлме тапратрĕ. Эпĕ хамăр енчи литература вăйĕ чăмăртанма пуçлани çинчен каласа патăм. Çакăншăн аташ (эпир пĕр-пĕрне çапла та чĕнеттĕмĕр) питĕ хĕпĕртерĕ. Сывпуллашнă чух, яланхи пекех, кăмăллăн алă парса:

– Мĕнех, ăнăçу сунатăп сире, – терĕ, унтан хулпуççирен çупăрласа, – санпа разведкăна кайма пулать, – тесе хушса хучĕ.

Çак тĕлпулу юлашки пуласса кам шутланă?..

Нумаях пулмасть эпĕ килти архивра пуханнă писательсен çырăвĕсене тишкерсе йĕркене кĕртрĕм, вĕсене Шупашкарти К.В.Иванов ячĕллĕ литература музейне пама хатĕрлерĕм. Вĕсем хушшинче А.В.Емельянов çырăвĕсем пысăк вырăн йышăнаççĕ. Çырусем хайлавсем пекех, писательсен кăмăл-сипетне туллинрех ăнланса илме пулăшаççĕ, асран кайми сăнарĕсене куç умне чĕррĕн кăларса тăрататççĕ.

«Всякая строчка великого писателя становится драгоценной для потомства. Мы с любопытством рассматриваем автографы, хотя бы они были не что иное, как отрывок из расходной тетради или записки к портному об отсрочке платежа», – тенĕ А.С.Пушкин. Унăн сăмахĕсем паянхи кун та вырăнлă янăраççĕ. А.Емельянов çырăвĕсем çак шухăша тепĕр хут çирĕплетеççĕ.

Анатолий ЮМАН

«Хисеплĕ Анатолий Федорович!

Çырăвăршăн та, паха сĕнÿсемшĕн те тавтапуç. Ăна эпĕ кĕнеке сутакансене вулаттарăп-ха. Начар ĕçлетпĕр. «Хатĕр пул» халь пĕрремĕш номерĕ тухрĕ ĕнтĕ, анчах вăл альманах кăна, хальлĕхе журнал уçма ирĕк паманха. Ăна çырăнтармалла тусассăн питех те аван пулнă пулĕччĕ те, малашне епле пулса тухĕ ĕнтĕ. Тепĕр номер кăларсассăн Мускава çитересшĕн.

Парнÿшĕн тавтапуç. Вуласа тухăп. Çыруне ĕнтĕ каю ан пустăр тесе çеç çыратăп. Ĕнертенпе парти конференцийĕ пырать-ха, хăнасем нумай. Вăрнарсем мансах каймаççĕ.

Халь ыйту пирки. Съезд пĕтсессĕнех секретариат пулчĕ. Анчах члена илессине ун чухне пăхса тухмарĕç. Январь уйăхĕн вĕçне унта тепĕр хут каймалла пулать, лару ятарласах йышăну ыйтăвне пăхса тухать. Ун чухне сан пирки пĕр-икĕ ăшă сăмах калăп. Хальлĕхе çакă çеç.

Çĕнĕ çул ячĕпе чĕререн саламлатăп, ырлăх-сывлăх сунатăп. Ĕçĕрхĕлĕр ăнса пытăр, тухăçлă пултăр.

Сире хисеплесе тата ыр сунса

А.Емельянов.

8.1.–76 çул».

«Хисеплĕ Анатолий Федорович!

Каçарсамăр, çийĕнчех хуравлаймарăм. Çĕнни темех çук та. Шавлы пирки хăвăр та пĕлетĕр, хăвăр та чĕререн çырнă сăвва ярса панă. Эп ăна тепĕр 30-40 çул хăнк! тумасăрах пурăнать пулĕ теттĕм. «Ялаври» юлашки ярăмĕ аван, ырă ят хăварас тенĕ пекех лайăх сăвăсем панă.

Эп секретариатра пултăм-ха. Хамăрăннисене, Хусанти Петрова илтĕмĕр. Кашнин пиркиех тухса калаçрăмăр. Санăнне питĕ кĕтрĕм, анчах çав ларăва валли пăхса тухайман иккен. Кам аллине лекессине те пĕлеймерĕм. Тепĕр ларуне те кайма тăрăшăп, эп ăна манманха, пулăшма тăрăшăп.

Çак çеç. Килсен-тусан кĕретĕр пулĕ тетĕп.

Ыр сунса А.Емельянов.

12.III.–76 çул».

«Хисеплĕ аташ!

Каçарсамăр. Малтанхи çырăвăр çине савăнăçлă хыпарпа хуравлăп терĕм, 29-мĕш мартра секретариата каймаллаччĕ те, чирлесе ÿкрĕм. Вĕсем ĕнтĕ пурĕ пĕрех члена илес ыйтăва пăхса тухман. Çын хисепĕ çитеймен пулас. Эпĕ ĕнтĕ тепĕр секретариатра пулма тăрăшăп. Сывалсассăн тÿрех Йошкар-Олана кайма тиврĕ. Паян çеç çитрĕм: хаçатпа çыру выртать-ха. Ыран района суйлав иртерме тухса каймалла, вара кĕçех хăвăр кунта килетĕр тенине пăхмасăрах парăма татса пăрахас терĕм.

Садая чысланăшăн, сума сунăшăн тавтапуç. Хăйне çеç тупаймастăп-ха, паян та шăнкăравларăм, темшĕн телефонĕ пĕр эрне еннех шарламасть. Таçта тухса кайнă пулĕ-и терĕм. Паян ман патран (ĕçрен) Ухсай та шăнкăравларĕ, каллех хуравламасть. Килсессĕн кĕрсе тухăр.

Сире хисеплесе тата ырлăх-сывлăх сунса А.Емельянов.

8.IV–76.

P.S. Эсир А.Воробьев вилнине пĕлмен те пулас? Пытартăмăр. Шел. Поэзин çухатăвĕ пысăк».

«Хисеплĕ аташ!

Ку этем шарламасть тесе ан пăшăрхан-ха. Икĕ эрне Мускаврах иртрĕ. Малтанхи эрнесенче хамăр плана, бюджета хÿтĕлеме кайрăмăр, тепĕр эрнинче съездра лартăмăр. Съездчĕ аван иртрĕ, аван кĕтсе илчĕç. Пысăк зала ĕçме-çиме те чĕнчĕç, пирĕнтен Дедушкин, Юхма, Ухсай кайрĕç, эп каймарăм. Аван иртнĕ терĕç. Сыпасси тармĕ, юлташсемпе тĕл пултăм. Армениреn те, Абхазирен те килнĕ пĕрле вĕреннисем. Эпир вара пухăнса лартăмăр. Тĕл пулманни шăпах çултала́к-çке.

Сан ыйтупа та интереслентĕм. Халь правлени сентябрь уйăхĕсĕр пулмасть, сан ыйту тăсăлса кайрĕ ĕнтĕ. Михалков çак съезд умĕн пухасшăн пулнă, халь съезд хыççăн отпуска кайса пĕтеççĕ терĕç. Шут çитмест иккен...

Съездран пăшăрханса таврăнтăм. Халь хĕрсех çырмалла та, эп вăхăта вара ун-кун ĕçпе ирттеретĕп. Отпуска каясси çеç кăштах лăплантарать.

Халь хĕрсех докладпа ларатăп. Вăхăт сахал. Отпуска кайиччен пухса калаçасшăн та, çитмен районсене çитсе курас.

Тепĕр хут тав.

Ырлăх-сывлăх сунса А.Емельянов.

27.V–76.»

«Хаклă Анатолий!

Тинех хаштах сывласа ятăм: паян заместитель ĕçе тухрĕ. Хуравлаймарăм, каçар, асрах тăраттăн-ха та.

Ытлашши ан кулян-ха, эп халь çине Мускавра пулман. 18 е 19-мĕш числасенче Грознăя тухса каятăп, унта секретариат пулса иртме кирлĕ. Мускав комиссийĕ тăхтама ыйтать пулсассăн, кунта ыйту лартма май çуккă-ши?

Айхи пирки-и, Асатте пирки-и – нимĕн те пĕлместĕп, татса калаймастăп.

Халь çине Мускавра пулман, унти ĕçе-хĕле килте ларса тавçăрма хĕн. Çавăнпа çунатна ытлашши ан ус-ха, пĕлсессĕнех пĕлтерĕп. Секретариатра мĕн пулса иртнине калĕç.

Михалков патне мар, Шундик патне çырса пăх. Вăл наци литературисемпе ĕçлет.

1978 çулхи план çаплипех выртатьха. 1976 çулхи планран 38 кĕнеке çĕнĕ çула куçрĕ, çавăнпа та 1978 çулхи планпа издательствăра çăрăлма та тытăнман. Малтанхи редакцинче эс пур, 2 листа тăрать. Мускавран мĕн ярса панине вуламан. Сыхласах хăварасчĕ.

Сире уяв ячĕпе чĕререн ырлăх-сывлăх сунса саламлатăп. Телейлĕ те хастар пул! Пĕлмесĕрех ытлашши ан кулян. Эп Шундикпа сан пирки 22–24-мĕш числасенче калаçăп.

Ыр сунса А.Емельянов.

5.XI–76».

«Анатолий, тăванăм!

Иртнĕ çырăвăра та хуравсăрах хăварнăччĕ. Вăхăчĕ çавăн пекрех килсе тухрĕ. 1978 çул планĕшĕн, ăна хамăршăн усăллă тăвассишĕн пĕр эрне Мускавра тĕпĕртетрĕмĕр. Çулсеренех хĕсеççĕ, хӳтĕленме тивет. Унтан тата хĕр качча тухрĕ, туйра кĕрлерĕмĕр. Каллех тепĕр эрне Мускавра çухалчĕ: черетлĕ секретариатран юлма май килмерĕ. Чылай çынна союза йышăнтăмăр, Чаковскин «Блокада» тата Залыгинăн «Комиссия» романĕсене Ленинла премии илме тăратрĕç. Хамăрăн ĕç-пуç начар, хут çук, икĕ кун комитетра кĕрлесе иртрĕ.

Кунсеренех шăтăкĕ-путăкĕ тупăнса пырать кунта, питĕрсе пама çеç ĕлкĕр. Пысăк уяв умĕн тесе ĕçлетпĕр-çке, плансене тултарайманнишĕн кам каçартăр. Хут (ку йывăр ыйту!) çук пиркиех кĕнеке издательствин планĕ те хăрушлăхра, типографи сĕм çĕрлечченех ĕçлет. Ăшши çук, сăрă типмест.

Тавах-ха сана кĕнеке пирки хаçатра хыпарланăшăн. Малтанхи повеçĕ халь каллех хама килĕшмест. Подстрочнике пăсма тытăнтăм, иккĕмĕш сюжетлă лини кĕртесшĕн. Çав ĕнтĕ вăл çыру япали: пăс, аркат, юса.

«Современник» пирки мĕнех калам? Ум сăмахне çырас тесессĕн подстрочнике те пулин вулас пулать. Унсăрăн та эп хӳтĕлеме пăхăп, пултарнă таран пулăшăп. Хăçан ярса панине пĕлтер кăна тата хăвах лайăхрах тăлмачă тупма тăрăш.

Рецензи витĕр лайăх тухсассăн вĕсем хайсем те тупсах паракан. Маншăн Шуртаков та, Юрий Галкин та рецензи хыççăн тупăнчĕç, издательство хăех вĕсене сĕнчĕ.

Çак çеç.

Ырлăх-сывлăх сунсаА.Емельянов.

27.X–77».

«Хисеплĕ Анатолий!

Шарламасть ку тесе çилленетĕн те пулĕ. Сăлтавсăрах мар-ха вăл ку япала. Финляндире пулса куртăмăр, унтан çитсессĕнех çырасшăнччĕ, каллех ĕç çулса тытрĕ. Январь уйăхĕнче план тултарайман. Унта та кунта чĕнчĕç. Халь баланс комиссипе лăпăртататпăр, обком отчечĕпе пуху хыççăн пуху иртеретĕп. Мускава писательсен пленумне тата секретариатне кайса килтĕм. Шуртаков çырăвне те хуравлаймарăм, ак, паян кăштах сывласа ручка тытрăм.

Пĕлсех, ырă мар пулса тухрĕ. Эпĕ эсир тӳссе иртернине ăнланатăп. Халь иртнĕ вăхăт ĕнтĕ, час-часах аса ан илĕр, манса кайсах ĕçлĕр. Сăвă кĕнеки пирки те ан пăшăрханăр, планрискер тухса каять. Вăл II-мĕш кварталта тухмаллаччĕ пулас. Халь çине сăвă кĕнекисем ытла та нумай тухрĕç – 8 кĕнеке, çавăнпа çеç гонорарсене саплаштарса пырас тесе тытса тăраççĕ. Хальлĕхе пире Бунин «туртса тухрĕ», ăна та çисе ятăмăр пулас. Ильбекĕн «Черный хлеб» тенине вырăсла çапса пĕтереççĕ, унтан вара тепĕр ăстрăм сăвă каять.

Сениэлĕн «Юрату юрри» текен кĕнекине пăрахăçларĕç. Иртнĕ япалисенчен вăйлăрах пулĕ тесе шутланăччĕ, вăл пур ача чухне çырнисене кĕртсе тултарнă. Ку шăв-шава эп Финляндирен килнĕ çĕре çĕкленĕ. Вĕсен патĕнче туслăх тени çукрах. Пĕлсех кĕнеки тухмарĕ те, маларах асăрхаттарнă пулсассăн çак айванрах сăввисене кăларса ывăтма пулатчĕ ĕнтĕ. Çапла вара çĕленĕ кĕнеке пĕтрĕ. Хайне те шел. Ун пек чухне тапăнаканĕ нумай пулать.

Хисеплесе тата ырă сунса

А.Емельянов.

21.II–1978 çул».

«Хисеплĕ Анатолий Федорович!

Кунта пурте йĕркеллех.

Çил-тăвăл та ĕмĕрлĕхе килмест, иртет. Сениэле строгий В.Максимова строгий выговор пачĕç. Мишша кĕнекине кăларма чарчĕç. Çакăнпа ĕç-хĕл вĕçленчĕ.

Айăпĕ кунта Мишшан хăйĕн. Начар сăвăсем кĕртсе тултарнă. Унăн «ыр сунаканĕсем» сахал мар, тухас умĕн шăвçак шав çĕклерĕç.

Санăн кĕнекӳ апрель уйăхĕнче тухса каять. Ăна никам та тытса чарман. Çавăнпа кулянма сăлтавĕ çук. Пурте йĕркеллех.

Ку çырăва Мускава тухса каяс умĕн çыратăп. Каçар, часах хуравлаймарăм.

Ырлăх-сывлăх сунатăп. Телейлĕ пулăр.

Хисеплесе А.Емельянов.

7.IV–78 çул».

«Хисеплĕ Анатолий!

Каçар çийĕнчех хуравлайманшăн. Ижевскра пулмалла пулчĕ те, кунсем уссăр иртрĕç. Ун пек-кун пек çĕре кайса курманччĕ. Кунта та ак, вак-тĕвек ĕçпе тинке тухать. Планĕ çук пек, анчах кашни кунах епле те пулин мероприяти иртет.

Темĕн санăн хуйху-суйху мăшăрлă килчĕ. Астăватăн пулсассăн, кĕнекӳне кĕртме хам пулăшнăччĕ. Халь те типографинче хăварттарнăшăн манах лекрĕ, манăн ун пек права çук, хăв пĕлен. И.П.Прокопьев вулайман пуль, халь Мускавра-ха вăл, хыпар-хăнар пулсассăн, пĕлтерĕп. 1980 çула кĕртме май çитнĕ таран пулăшăп, хăвна пĕтнĕ çын тесе ан шухăшла. Кунтан катара пулни чăрмав кӳрет ĕнтĕ, анчах суйласа илсе ал çырăвне тăратсассăн, ятарлăрах сăвăça пăхса тухтарăпăр.

Йывăр сана, ăнланатăп, çапах пуçна ан ус. Кĕнекӳнте лайăх сăвăсем пур, çĕннисем те çук мар санăн. Тепĕр хут пăхса тухса киввисене те юса, кун чухлĕ ăсталăха туяннине сая ан яр. (...)

Çирĕп сывлăхлă пулăр, сиксе тухнă хуйхă-суйхăна тӳсĕмлĕн тӳссе иртерĕр. Çанă таврăсах ĕçлер, аташăм. Ĕç çеç хуйхă-суйхăран та çăлать, ыр ят та хăварать. Тепĕр хут калатăп: пулса тухнине ытла чĕрĕр патне ан вырнаçтарăр.

Ырлăх-сывлăх сунса, хисеплесе
А.Емельянов.
5.VII–78 çул».

«Хисеплĕ Анатолий!

Эп каярахпа, 1-мĕш октябрьте Орлов ĕçе тухсассăн çырса яратăп тенĕччĕ. Анчах кĕтсе илеймерĕм, мĕншĕн тесессĕн хам та 1-мĕш октябрьте Мускава, секретариата тухса каятăп. Çавăнпа пĕр-икĕ сăмах пĕлтерес терĕм. Эпир октябрьте, III декадăра издательство планне пăхса тухатпăр. 1-мĕш декадăра кунта 4 республикăран килнĕ литераторсен туслăх каçĕ пулать, вĕсем Канашра, Çĕнĕ Шупашкарта тата Шупашкарта тĕл пулаççĕ. Çавăнпа килес пулсассăн II-мĕш декадăра лайăх пулмĕ-ши?

Заявленисене пама та каях юлман пулĕ. Çапах та эп вĕсене хам кайиччен В.О.Максимова парса хăваратăп пулĕ. Халь плана кĕртесси пирки çăмăлах пулмĕ – тăрăшăп. Ун чухне члена илесси пирки сăмах пыратчĕ. Калаçăпăр-ха, хўтĕлĕп. Мана эс парăнманни савăнтарать. Ĕçлени аван, вăл чун апачĕ.

Кунта çанталăк çав тери сивĕтсе пăрахрĕ. Ĕçре те сивĕ, килте те нўхреп. Шăнса кўтнĕ алпа çыратăп ку çырăва, ан тирке, вуласа тухайăн-и?

Çырăвăнта питĕ нумай ыйту хускатнă эсĕ. Çитсессĕн вĕсем пирки те калаçăпăр. Хăна çурчĕ кирлĕ пулсассăн, маларах пĕлтер, эпир маларах ыйту хускатăпăр.

Ку çул йывăр килчĕ, ĕçĕ-хĕлĕ сирĕн те, пирĕн те мăй таранах. Эпир ĕçлеме хăнăхнă, çакă паха. Ку эмел те, шанăç та.

Кĕске хуравăмшăн, тархасшăн, ан пăшăрхан.

Ырлăх-сывлăх сунсаА.Емельянов.
27.IX–1978.

P.S. Каçхине çырса пăрахнăччĕ çак çырăва, ирхине почта тухса илтĕм те, Нагаткинăран тепĕр çыру пур. Çĕнĕ хыпарсемшĕн тавтапуç. Кунта та пирĕн çĕнни сахал мар. Шел, мĕншĕн çырмаççĕ пирĕн çыравçăсем? Путакан карапран чи малтан йĕкехўресем тараççĕ, ăна хăв та пĕлетĕн. Карап путать, анчах тăватăураллисем сывă юлаççĕ. Акă ăçта хăрушлăх!

Ĕçле, тăрăш! Кĕрмеш! Кунта Миша Сениэле И.Д.Кузнецов «Сов.Чувашия» хаçатра тўсе илчĕ. Айванларах статья, ĕлĕкхи шайпа çырнăскер. Анчах вăл Миша ятне çеç çĕклет. Юхмана çапла çĕклерĕ вăл ĕлĕк.

Кил-йышăра, мăшăрăра салам!
Хисеплесе А.Е.
28.IX–78».

«Хисеплĕ Анатолий Федорович!

Çырушăн, манса кайманшăн, тав! Хастар та çирĕп сывлăхлă пул. Тăван хаçатупа пирĕн пурнăçа манмасăр утнăшăн тайма пуçăм. Кунта эпир Н.И.-Шелеби уявне питех те йĕркеллĕ те аван ирттертĕмĕр. Хатĕрленме те нумай та тĕплĕн хатĕрленме тиврĕ те, пайти пур. Аксуран хăнасем килчĕç, вăл шутра А.А.Полоруссов, Шелеби мăнукĕ, пулчĕ. Халь пушкăртсене кĕтсе илме хатĕрленетпĕр. Вĕсем 200 çын ытла 15-мĕш июньте килсе çитеççĕ.

Поэмуна та илтĕм. Пĕрре вуласа тухрăм. Васкамасан тепре вуласа тухса парăп. Мана халаллама кирлĕ мар, атту хама та ырă мар, хăвна та йăпăлти тейĕç. Пурăннă чух çулсен картне шута илмесĕр ĕçлесчĕ. Çав çеç. Эп хамăн юбилея темĕнле элес-мелес чаплă тума шухăша та илмен. Хистесен, ĕçки-çикине туса парса писательсене чĕнĕп. Лару тавращĕ те, шăв-шав та çĕклесшĕн мар эп. Сăпай пулнине мĕн çиттĕр?

Пирĕн Петĕр Львов пур тата. Вăл та 1932 çулта çуралнă. Çак çеç хальлĕхе. Сăввусем ĕç сĕтелĕ çинчех. Мехел кăна çитеймест-ха.

Телейлĕ пул.
Хисеплесе А.Емельянов.
26.V–1981».

«Хисеплĕ Анатолий Федорович!

Ырă хыпарсемшĕн тав! Хаçатна пи-

сательсен Союзĕн пĕлтерӳ хăми çине çакса хутăмăр, писательсем те, иртен-çӳренсем те вулаççĕ.

Кунта пирĕн ĕççи пырать. Кăкшăмра çамрăксен семинарĕ ĕçлет, вĕсене икĕ эрнелĕх пухнă. Сирĕн патăртан Аксуна чĕннĕччĕ те, килеймерĕ. Вун пилĕк çын пухрăмăр. А.Артемьев, Ф.Уяр, Н.Терентьев, В.Широков семинара ертсе пыраççĕ.

Пушкăрта кайма хатĕрленетпĕр. 23–28 числаччен пырать вăл уяв. Манăн та пĕр-икĕ кунлăх кайма тивет. Эп 26-мĕшĕнче каялла килесшĕн, 27-мĕш числара Мускавран 5 пăлхар писателĕ, тăлмачă тата пысăк союзран Борисова текенскер çитмелле. Вĕсемпе пирĕн виçĕ талăк тертленме тивет. Ятлисенчен Николай Христозов текен поэт пур. Çапла вара май уйăхĕ хĕрӳллĕн вĕçленет. (...)

Ырлăх-сывлăх сунса А.Емельянов.

19.V–82».

«Хисеплĕ Анатолий Федорович!

Каçар, тăванăм, хуравне юриех те тăсса пытăм-и? Халь сана савăнтарам: приемнăй комиссире сана писательсен союзне илнĕ, халь ĕнтĕ июль уйăхĕнче правленире пăхса тухмалла. Ку ала витĕр те ăнăçлăн тухасса шанатăп. Мускавшăн, вăл секретариатра хам пулсассăн, кулянма кирлĕ мар. Ытти-ытти ăнăçлă пулсассăн тата Мускав вăхăтра пăхса тухсассăн кăçал член билетне алла та илĕн.

Сăввусене те илтĕм. Пĕтĕмĕшле илсессĕн – лайăх, анчах хăш-пĕр ырăнсене юсаса чăн-чăн поэзи шайне çитермелле пулнă. Шел, унта санăн никам та çук, ют куç ытларах курать. Халь ытлашши ан кулян ĕнтĕ. Членлăх вăл хăвăнтан ытларах ыйтса ĕçлеме хистет. Пĕччен пулнишĕн те ан кулян: ăмăрт кайăк сунара кĕтӳпе тухмасть.

Ытти-ытти кивĕллех. Пушкăртран кĕрлесе таврăнтăмăр та, Пăлхар писателĕсене кĕтсе илсе ăсатса ятăмăр. Сентябрьте Украинăна кайма хатĕрленеççĕ, эпир, 5 çын, сентябрьте каллех Пушкăрта кайса Атăл тата Урал тăрăхĕнчи писательсен прозине сӳтсе явма каятпăр. Кам пĕлет: улшăну пулмасан сентябрь вĕçĕнче Пăлхара çитсе килĕп-и?

Çемйӳне тата юлташусене салам.

Ырлăх-сывлăх сунса –

А.Емельянов.

4.VII–82».

«Хисеплĕ Анатолий Федорович!

Мускавра чылай хушă пултăм, хамăр бюджетпа плана хӳтĕлеме тӳр килчĕ. Чирлесе таврăнтăм.

Паян авторемзавода кайма тухнăччĕ. Ирхи почтăна илекенех те марччĕ эп, тем хистерĕ тата. Илсе кĕтĕм те, хаçат ăшĕнчен санăн çыру сиксе тухрĕ. Ак тамаша! Эсĕ те 50 тултартăн иккен. «Хатĕр пул», «Ялав» сăввусене кĕрлеттернĕ, эпир паян телеграмма яратпăр ĕнтĕ. Наградăлас енĕпе каярах юлтăмăр, 60 çулна çĕр çĕмĕрсех чыслăпăр. Пырас енĕпе те мехел çитеймĕ. Пирĕн машина юсавра, Мальцев çаплипех шофер тупаймасть. Çавăнпа ан пăшăрхан, ан çиллен, ху каланă пек Шупашкарта чыслăпăр сана.

Халь хам ятран шĕл-кăварлă тӳпене кармашнă ятпа чĕререн хисеплесе саламлатăп, ырлăх-сывлăх сунатăп. Телейлĕ те творчествăра хастарлă пул, яш туйăмран ан сивĕн, ан пис, атту поэзи тени çухалать. Хура кунсем ан килччĕр, ĕмĕр-ĕмĕр саншăн çурпа çулла пултăр! Кил-йышна тайма пуçăм. Ыталаса чуптăватăп, тăванăм!

Хĕрӳ салампа А.Емельянов.

10.IX–1982».

«Хисеплĕ Анатолий Федорович!

Çыруна та, сăввусене пичетленĕ хаçата та илтĕм. Тав! Киленсех вуласа тухрăм. Уйрăмах Г.Ефимова халаллани килĕшрĕ. «Тантăшĕпе» татах лармалла пекчĕ, пĕрре редакцилес кăмăл та çуралчĕ те, санăн лабораторине тĕкĕнес темерĕм. Юратмастăп çынсе-

не юсама. Санăн пурнăçу унта ахаль те çăмăлах мар, хаçатра хам ĕçлесе курнă, вăл художник талантне типĕтекен кăмака кăна. Çапах та пурăнас пулать вĕт санăн, ачусене ӳстермелле, пирĕн Толстойăн пек имени çук.

Тав сана Яковлевшăн тăрăшнăшăн. Эсĕ унăн «Воспоминание» текен кĕнекине туянса юлтăн-и хăть? Епле хĕнасаппа кăларма тиврĕ ăна. Пирĕн хăшпĕр ученăйсем халĕ те вулакансене хурапа шурра уйăрмасть тесе шухăшлаççĕ. Виçĕ пин экземпляр икĕ-виçĕ эрнере сутăнса пĕтрĕ. И.Яковлев ячĕ çулсеренех пирĕн халăхшăн улăпланса пырать. Çав савăнтарать. (...)

Ĕçĕ нумай, хам çырайманшăн çеç ăшра тăвăлса пурăнатăп.

Ыр кур, телейлĕ пул. Кил-йышна салам. А.Емельянов.

3.XII–82».

«Хисеплĕ те хаклă

Анатолий Федорович!

Çырăвушăн, хыпарсемшĕн тав. Мана Григорий Васильевич таврăнсанах каласа пачĕ. Вĕсем питĕ кăмăллă таврăннă, сирĕн халăх еплерех лайăххинчен тĕлĕннĕ. Тен, малашнехи ĕçсем-хĕлсем лайăхах пырсассăн, билет пама хăçан та пулсассăн çитсе те курăп. Халь, çул пĕтнĕ май, унта та кунта туртаççĕ пире, хамăн тата çул итогĕсен доклачĕпе лармалла. Вулакалатăп, кунсерен тенĕ пек 2-шер страница çыра-çыра пăрахатăп. Халь числине палăртман, килес кăмăлу пулсассăн, пĕлтер, йыхрав ярăпăр.

Лешне, хам çине тăнă пулсан, çĕнсе илме пулатчĕ. Ан тив, вăл ватăрах, илтĕр. Мана «Октябрь» журналăн премийĕ те паха. Вăл-ку сайра писателе лекет. Пĕтĕмĕшпех çырмăп çырура, курсан каласа парăп. Ĕçрен тухма шухăшласах, чун хавалĕпех хатĕрленсе çитрĕм те, обкомра заявленине йышăнса та юлмарĕç. Мĕн каланисене те çырмăп. Ĕçлекен çынна пирĕн вĕчĕх чунлă чăвашсем хаклама пĕлмеççĕ. Çырма пусăнни, чуна туртаканни – лавĕпе. Тĕплĕн ларса ĕçлеме вăхăт çук. Çав кулянтарса нервăсене хавшатать. Атя, тӳскелер кăштах, анчах профессионала тухма вăхăт ĕнтĕ. Ачасене ӳстернĕ, халь пире, арăмпа иксĕмĕре, нумаях кирлĕ мар. Кăна эп сана кăна пĕлтеретĕп, тен, Шупашкарта сăмахĕ те сарăлчĕ пуль. Вăл-ку тарама. Пурăнарха, ĕçлер. Ĕç çеç сыватать.

Ырлăх-сывлăх сунса А.Емельянов.

16.I–1983 çул».

«Хисеплĕ Анатолий Федорович!

Каçару ыйтатăп: иртнĕ çырăвăра хуравлаймарăм. Ĕлĕкрех, ĕçе пула, вăхăчĕ сахалрах пекчĕ, халь татах та сахалтарах-ши, е çулсен лӳпперĕ пуссах пырать-ши? Ху çыратăн-çке: аллă пиллĕк тултартăмăр. Те васкарах пуçларăм, çырăнасса вара питех те йывăррăн çырăнать. Çырса пăрахатăп та, пĕрер уйăх пек выртсассăн, татах тытатăп. Тепре çырса тухса машинкăна паратăп. Ун хыççăн та тепĕр уйăх выртать, татах хирсе тухатăп, машинкăна паратăп. Ĕненетĕн-и, «Чир» текен очерка («Тăв.Атăл», 5№) çур çул енне çыртăм. Очеркне ырлакалаççĕ-ха, критика шăпах. Ирĕксĕрех А.Пушкин калани аса килет: «У нас, как у чувашей, критики нет». Урăх сăлтавпа каланă-ха та, анчах халь пророкла пулса тухрĕ. Эсĕ маттур-ха, унта-кунта çыратăн. Сăввусен лайăх ярăмĕ тухрĕ, халь ак сентябрьти «Ялав» санăн тĕрленчĕкӳпе уçăлать. Савăнатăп саншăн! Мухтанатăп. Атту пĕр хушă питĕ хăйлама пуçланăччĕ пирĕн. Ăна ху пĕлен. Ман асра техникумра вĕреннĕ чухнех Гиппократ «Не навреди» тени кĕрсе юлнă, çав мехелпех ĕмĕре вĕçлесшĕн те, пулсах пĕтĕ-и, çук-и – малашлăх кăтартĕ.

Тав сана «Шăпана» пичетленĕшĕн. Тĕрĕссипе эпĕ вĕсене хамăрăн питĕ вăрăм çыракансене «кĕске çырма та пултаратпăр, кĕске япалара та ахах кăтартма пултаратпăр» тесе çырнăччĕ. Тав Семенова, пĕр сăмах улăштар-

масăр янă. Вĕсем «так себе»скерсем кăна, ун пеккисене эпĕ вăтăр çул каяллах çырнă.

Манăн çак çеç. Ялтан паян таврăнтăм. Çĕр улми кăларса пĕтертĕмĕр. Тăвансене те пулăшкаларăм. Халь каллех хут умне ларатăп ĕнтĕ.

Çемйӳне салам! Ыр курăр, телейлĕ пулăр.

Хисеплесе А.Емельянов.
20.VIII–1987».

«Хисеплĕ Анатолий Федорович!

Иртсе кайнă уявсем ячĕпе чĕререн саламлатăп! Ĕлĕкхиллех сывă та хастар пул!

Кĕнекӳшĕн тав! Тĕнчене тухнишĕн чунтан савăнатăп. Ман шутпа, сăввусене питех те лайăх куçарнă. Мускав тăлмачĕсем иртĕхнĕ ĕнтĕ, кунта сан сăввусене ху çырнă пекех хăварнă. Ухсая халаллани – классика! Ăна эс Аристарх Дмитриева пар. Якку пичче çинчен кĕнеке хатĕрлет вăл, сан реквиемӳ шăпах ун валли питех те кирлĕ.

Кашни сăвву пирки калаймăп. Аван. Çак çеç. Савăнсах вуласа тухрăм. Хĕпĕртерĕм саншăн: çав тери! Атту, астăватăн пулсассăн, сана пĕр вăхăтра пысăк урлав хурасшăнччĕ хăшĕсем. Халь хурса пăхчăр-ха вĕсем! Сур кăна!

Эпĕ те ĕлĕк сăвă çыраттăм. «Тăван Атăлăн» 2-мĕш номерне вуласа тух. Вĕсене хам валли çырнă. Ĕлĕкрех пичетре официаллă çырнисем кăна кун курнă, халь çул уçă. Эпĕ чунпа çырнă вĕсене, ăспа мар. Паянхи поэзине тишкерес пулсассăн, «ăслă» сăвăçсем хунаса кайрĕç. Çав тери! Кама кирлĕ вĕсен философийĕ? Сана-и? Мана-и? Халăха-и? Çавăнпа пĕр пин экземплярпа тухаççĕ те. 800 кĕнекине республикăри бибколлектор туянать, 200 экз. республика тăрăх саланать. Илекен çук. Шел. Тăван халăх поэзирен риснине туятăн та макăрас килет. Эпĕ çак туйăма чи малтан туйнă, çавăнпа прозăна куçрăм. Тĕрĕс турăм.

Çак кăна. Пурнăçăм пĕр евĕрлĕ. Ялта ытларах пурăнкалатăп.

Ыр сунса А.Емельянов.
10.V–1991».

«Хисеплĕ Анатолий Федорович!

Сана, маттур та пултаруллă Чĕмпĕр чăвашне, чĕререн саламлатăп. Чĕререн тав сана мана сăвăпах чыс тунăшăн. Эпĕ çав ята панине пĕлмен те, ялта пурăннă. Телефон ĕçлеместчĕ, радио калаçмасть. Темле ăна, çав чыслă ята, лăпкăн кĕтсе илтĕм, каярахпа кăна-и унăн пĕлтерĕшне ăнлантăм. Хăвах пĕлетĕн мана: наградăсем, хисеплĕ ятсем ыйтман эпĕ. (...)

Савăнмаллиех çук-ха манăн. Карчăкăм час-часах чирлекелет. Çавăнпа выльăххисене те пăхма тивет. Килте ĕç нумайне эсĕ ху та манран лайăхрах пĕлетĕн. Тата çав депутат пулни те вăхăта илет. Иртнĕ эрнере тăватă кун çухатрăм, халь каллех çутĕç министрне шкулсене илсе каясшăн. Ахалех çав депутат пуласшишĕн çапăçăва кĕтĕм тесе шухăшлатăп. Писателĕн политик пулмалла мар тенĕ Чехов, анчах хăй те «Сахалин» очерка çырса пăрахнă. Иксĕмĕр ĕнтĕ çав тери савăнмалли вăхăтрах пурăнаймарăмăр. Пурнăçа хам пĕлнĕ пек туса хурăттăмччĕ, анчах пире влаçшăн антăхса çунакан пуçлăхсем ал çĕклекен тата алă çупакан чурасем туса хунă. Салатрĕç, аркатрĕç, йĕрки хăçан пуласне пĕртен-пĕр Турă кăна пĕлет пуль. Тĕпри лаша пирĕн лава чăнкă çыран патне илсе пычĕ, халĕ анса каясси çеç тăрса юлчĕ пулас.

Санăн пурнăçунта çав тери йывăр вăхăтсем пулнине пĕлетĕп. Ун чухне эпир пурте каланисене пурне те тунă. Урлав хуракансем сахал мар пулнă пирĕн. Атя, хăть тертлене-тертлене союза илтĕмĕр. Анчах халĕ писателе хĕссех çитерчĕç: хут çук, кĕнеке кăларма йывăр. Мускавра ал çырăвĕсене каялла тавăрса параççĕ. Пирĕн те кунта, уйрăммăнах сăвă кĕнекисене (тупăш памасть тесе) планран кăлара-кăлара

ывăтаççĕ. Кам профессионал пулса ĕçлĕ малашне? Пĕлместĕп.

Халь, пичетленес тесессĕн, вăрăхурахпа юххасем çинчен çеç çырмалла. Пĕлетĕп, ку лару-тăру вăхăтлăх пулăм кăна, чирĕ иртĕ-ха.

Çемйӳне салам тата ырлăх-сывлăх. Кăçал кăмпа тухмарĕ, Толя: çумăр çук. Сентябрьте уплюнкка пулать пулĕ тетĕп.

Ыр кур, телейлĕ пул.

Хисеплесе А.Емельянов.
10.VIII–1991».

«Хаклă Анатолий Федорович!

Тав сăмахĕсĕр пуçне мĕн калам ĕнтĕ сана!

Çыру ăсатрăм сан патна, илтĕн пулĕ ĕнтĕ. Унтанпа мĕн улшăну пултăр? Тухса çӳрейместĕп. 14-мĕшĕнче пуху хыççăн-и, е 15 августра Вăрнара каятăп. Округра татса паман ыйтусем нумайланчĕç. Хампа пĕрле çутĕç министрне тата ял хуçалăх министрĕн заместительне илсе каясшăн. Килте те ĕç мăй таранах. Карта тытса пĕтермелле. Ывăлсем дача туянчĕç те, вĕсен те ерçӳ çук. Хамăр аннесене сахал пулăшнă пекех, халь ача-пăчаран усă курма хĕн.

Çыру сĕтелĕ умне халь тĕпленсех лараймарăм-ха. Килти ĕçсене пĕтерсессĕн ларатăп пуль тесе шухăшлатăп. Çитес çул ĕнтĕ (эпĕ малтан) хамăр ватăлни çинчен тĕнчене пĕлтерĕпĕр. Юбилей валли пĕр вĕçленĕ япала та çук, çав пăшăрхантарать мана.

Тав сана, тăванăм, мана манса кайманшăн. Таçтан тупнă эсĕ манăн фотона? Санăн вăй-халунтан пайтах тĕлĕннĕ эпĕ. Ăмсаннă, ăмсанатăп та.

Калава юбилей чухне яма пулнишĕн тав. Сана тиркесе вулама виçĕ сăвă ярса паратăп. Эпĕ вĕсене пухма тытăнтăм. Яш чухне çырнисене халь хулăн тетраде куçаратăп. Мачча çинче чемоданра выртса сарăхса кайнă вĕсем, чернилĕ те тĕссĕрленнĕ. Атя, пичетленмесен те выртчăр ĕнтĕ.

Çак çеç.

Ырлăх-сывлăх та пысăк телей сунатăп сана.

Хисеплесе А.Емельянов.
13.VIII–1991».

«Хисеплĕ Анатолий Федорович!

Пуриншĕн те пысăк тав сана! Хуна ун пек пулăшăп-ши?

Менелникне, тĕрĕссипе каласан, туман. Хам сасартăк гриппа чирлесе сасăсăр тăрса юлтăм, халĕ те больницăна çӳретĕп. Халь, пĕтĕм халăх йывăрлăха кĕрсе ӳкнĕ тапхăрта, мухтав сăмахĕсем илтме тивĕç-и эпĕ? «Хыпар» пысăк интервью пичетлесшĕнччĕ: çураçмарăм. Халь сăпай пулнине мĕн çиттĕр? Атя, пурăнса пăхар-ха, тен, маларах татăлса анмасан, çитмĕле те çитĕпĕр. Пропаганда бюровĕ юбилея районта ирттересшĕн. Унта та шавлама кирлĕ мар пулĕ тетĕп. Халь ялтан яла сĕтĕрĕнсе çӳреме аллă çулта мар. Ахаль те депутат ĕçĕсемпе час-часах çулра пулатăп. Кĕçех отчетпа каймалла. Пĕр эрнере 8 ялта пулмалла. Халь халăхĕ те суйлавсенчен, пухусенчен йăлăхса çитрĕ. 12 февральте – сесси. Унта «Ялавпа» «Тăван Атăла» хӳтĕлесе хăварас тĕллевпе пурăнатăп, атту панкрутах тухаççĕ. Издательство та йывăрлăхра.

Çак çеç, Анатолий Федорович. Сăввисенче унта икĕ сăмах урăхланнă кăна, анчах ăнланăвĕ çухалман.

Сана унта-кунта çӳреме те çăмăл мар. Хваттер шантараççĕ-и хăть? Хулара пурăнсан, ытларах ĕçлеттĕн кăна, канма яла кайнă пулăттăн.

Сыв пул-ха. Лайăх та таса сывлăхлă пурăн.

Ыр сунса сана пуç таякан

А.Емельянов.
13.I–1992».

«Хисеплĕ Анатолий Федорович!

Малтанах каçару ыйтатăп: санăн юбилейна пыма питĕ хатĕрленеттĕм, çавăнпах çыру та çырмарăм. Мĕн тăвăн ĕнтĕ, чирĕмех ура хурса пырать: эс

Чĕмпĕрте кĕрленĕ чухне 37,1 – 37,3$^0$ температурăпа сăмса шывне юхтарса лартăм. Чирлипех пĕр кун çӳрерĕм-ха, Г.А. Ефимов: «Ма хуна хĕрхенместĕн?» – тесе те ятларĕ. Кашни грипах лекет, имун системи хавшанă. Виличчен асăрханса пурăнам ĕнтĕ.

Юбилейна эсĕ питĕ вăйлă ирттернĕ. Чăваш писателĕсене ун пек чысланине астумастăп эпĕ. Хам ĕçленĕ чухне Я.Ухсай 70 çул тултарнине Мускавра уявласа курнăччĕ... Эсĕ çав чыса тивĕç те ĕнтĕ, Чĕмпĕр чăвашĕсене çĕклес тесе пайтах вăй хутăн. Çăкăр-тăвар хирехирĕç.

Буклетна та аван кăларнă. Кун пеккине, эпĕ астăвасса, Я.Ухсая, кайран Пурхиле М.Юхмана туса панăччĕ.

Кĕнекӳне те вуласа тухрăм. Хăшпĕр куçарусене унчченех вуланăччĕ. Лев Бурдин куçарăвĕсем вăйлăрах. Хушаматне хура рамăна илнĕ те, вилнĕ-им вăл? Шел. Эпир ритм, рифма тыткăнне лексе тĕп шухăшсене те сапалатпăр, хамăр сисместпĕр ăна, Лев Бурдин çав шăйрăксене те асăрханă, сирĕн тĕп шухăша сыхласа хăварнă. Пахи çавă. (...)

Питех те сахал çыратăп. Романпа ларатăп-ха та, çак йывăр самана чăрмантарать, ирĕксĕрех кăпăр-капăр статьясем çырма тивет. Атту çав шухăшсем тăлласах лартаççĕ те, татса пăрахма тивет. Кун хыççăн кун иртет, шухăш çивĕчлĕхĕ мăкалать, вара ăсталăха ытларах шанма тивет. Ухсай ятлани аса килет: «Вăхăтна пули-пулми чăваш писателĕсене вуласа ан пĕтер, вырăс классикĕсене вула». Пуçлăхра ларнă май такама та вуланă, халь И.С-.Тургенев çырнисене вулама тытăнмалла пулĕ тетĕп. А.С.Артемьев питĕ юратать ăна. Каçар васкасах çырнă çырушăн. Ан ватăл, яшлăхри хĕрӳ кăмăлпа ĕçле, вара пурте пулать: поэми те, сăвви-юрри те.

Телейлĕ те çирĕп сывлăхлă пул.

Ыр сунса А.Емельянов.

7.XII–1992».

«Хисеплĕ Анатолий Федорович!

Хăвна, кил-йышна, мăнуксене чĕререн хисеплесе Çĕнĕ çул ячĕпе саламлатăп, тăнăç пурнăç, тĕреклĕ сывлăх, иксĕлми телей сунатăп.

Тăватă кун сессинче супса лартăм та, паян конвертсем, открыткăсем шыраса тăн тухрĕ, вĕсене те илсе пĕтернĕ иккен. Çавăнпа тата хут тупайманшăн каçар.

Хальхинче сесси умĕн нумай ĕçлеме тиврĕ. Ăнăçу пулчĕ ĕнтĕ. Писательсене пулăшма укçа пачĕç, издательство валли 57 млн. тенкĕ дотаци параççĕ. 1993 çултан гонорар хакне 8-10 хут ӳстерме пулать халь, кĕнекӳне ахалех васкаса кăлартăн, ура сараттăнччĕ кăштах. Журналсене дотаци парас ыйтăва та татнă, вĕсен гонорарĕ ӳсет. Пĕр уйăх хама валли пĕр йĕрке те çырай-марăм, финанс органĕсенчи бюрократсемпе вăрçа-вăрçа юнри сахăр çав тери ӳссе кайрĕ. Больницăна хурасшăнччĕ, аран-аран тӳскелесе ирттертĕм ĕнтĕ. Çĕнĕ çул иртсен куç курĕ унта. Хамăн округри проблемăсем купипех-ха, тĕл пулăва кайиччен вĕсене татса памалла.

Ку упăте çулĕ савăнăçпах килмерĕ маншăн: куккана, унтан шăллăма пытартăмăр. (...)

Вилĕмрен хăтăлма çук. Çапах хуйхă-суйхă самаях минретет, çавăнпах пуль çыру сĕтелĕ умне ларас кăмăл та пĕтрĕ.

Малалла писательсен ĕçĕ-хĕлĕ йĕркеленсе каймалла. Çырнисене кăштах хакласан, хĕн-нушисене халăхпа тӳссе ирттерĕпĕр...

Ыр сунса А.Емельянов.

27.XII–1992».